24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ФЕВРАЛЬ 6 ЭРНЕКУН 31 (6056) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 4-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, малалла наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 3-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 29 самолетне персе антарнă, аэродромсем çинче 16 самолет пĕтерсе тăкнă. Çак кун нимĕçсенне пĕтĕмпе 45 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 4-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 7 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Февралĕн 3-мĕшĕнче пирĕн авиацин чăсĕсем нимĕçсен 3 танкне, бронемашинине, грузсемпе войскăсем турттарса пыракан 230 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 150 лавне, 14 орудине, 6 минометне, зенитнăй пулеметсен 3 точкине пĕтерсе тăкнă, чугунçул çинчи 2 эшелона вут тивертсе янă, 15 вагона аркатса тăкнă, противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă тата пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противник халăх пурăнакан 3 пунктра çирĕпленсе ларнă, пирĕн чăçсен наступленине чарса лартма хăтланнă. Пирĕн боецсем нимĕç чăсĕсен флангĕсенчен кĕрсе кайнă та тăшмана пĕтĕмпех çавăрса илес хăрушлăх туса хунă. Хăйсен вилнĕ тата аманнă салтакĕсемпе офицерĕсене 1.300 çынна ытла пăрахса хăварса, нимĕçсем нимĕн йĕркесĕр каялла тарнă. Пирĕн войскăсем тăшманăнне 3 танкетка, 14 оруди, 79 автомашина, 194 велосипед, 10 пулемет, 540 винтовка, 120.000 снаряд тата 4 вагон авиабомба тытса илнĕ. Тепĕр участокра Захаров юлташ ертсе пыракан часть нимĕçсене вĕсем хирĕç тăнă вырăнтан хĕссе кăларнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла вĕлернĕ. 12 автомашина, 9 оруди, 1000 мина тата ытти хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть каялла чакакан противника хăваласа пырса пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 3 пункта йышăнса илнĕ, тăшманăнне 5 оруди, вăл шутрах инçете перекен пĕр оруди, 11 пулемет, 4 миномет, снарядсем тиенĕ 37 автомашина, мирлĕ халăха çаратса пухнă пурлăхсене илсе пыракан 10 лава тата ытти трофейсем нумай тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна яхăн вĕлернĕ.

* * *

Старший лейтенант Шрамко батарейинчи артиллеристсем, тăшман чăсĕн «психикăллă» атакине сирсе янă чух, тӳрех тĕллесе персе тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлернĕ.

* * *

Н. ялĕ патĕнче пулнă çапăçура танкист кĕçĕн лейтенант Моргун тупăран тĕл персе противникăн темиçе огневой точкине пĕтерсе тăкнă, хăйĕн машинин гусеницисемпе таптаса тăшманăн 3 орудине лапчăтнă. Тăшман снарячĕ лекнипе совет танкне вут тивсе илнĕ, Моргун аманнă. Анчах та советăн хăюллă танкисчĕ, малалла кĕрешсе пырса, тăшманăн пулемечĕсен татах 3 йăвине пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 30 çынна çити вĕлернĕ.

* * *

Донбасри горнякĕсен Г. юлташ ертсе пыракан партизанла отрячĕ нимĕçсен поезчĕ çине тапăннă. Совет патриочĕсем гумтир тиенĕ вагона, бензин тултарнă цистернăна тата тĕрлĕ çар грузĕсем тиенĕ темиçе платформăна пĕтерсе тăкнă. Çав вăхăтра нимĕçсен 10 салтакне вĕлернĕ. Темиçе кун иртсен партизансем противникăн штабне аркатса тăкнă, тăшманăн 2 обозне пĕтернĕ. Вĕсенчен пĕри 12 лавран тата тепри 60 лавран тăнă пулнă.

* * *

Нимĕçсен 268-мĕш пехотнăй дивизин 499-мĕш полкĕн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Вильгельм Штрейт çапла каласа панă: «Эпир питĕ пысăк сухатусем тăватпăр. 7-мĕш ротăра 28 çын кăна юлчĕ, вĕсенчен 6 çыннине тăм илнĕ. Тăм илнипе вăйлăн суранланнисене тыла яраççĕ, çăмăллăн суранланнисене вара стройрах хăвараççĕ. Анчах та вĕсем çапăçма пултараймаççĕ. Вĕсем пурте е ухсахлаççĕ е аллисене ирĕклĕн сулкалама та пултараймаççĕ. Сивĕсем пурне те хăратаççĕ, вырăссем наступлени туса пынин нимĕç салтакĕсен вăрçас кăмăлне пĕтĕмпех пĕтерсе лартрĕ. Пурин те пĕр шухăш — мĕнле те пулсан чĕрĕ юласси. Пире малтан 15 километр, унтан 30 километр, унтан татах 60 километр каялла чакма хушрĕç. Анчах эпир унтан та ытларах чакса пыратпăр. Салтаксен апат-çимĕçĕ питех те начарланчĕ. Кунне 250 грамм çăкăр тата кăнтăрла пĕр çăпала яшка параççĕ. Салтаксем пурте пыйтланса кайнă. Ут-тире юн юхаччченех хыçса пĕтерни. Нихăшĕн те хĕллехи тумтир çук. Браухича улăштарни нимĕç салтакĕсене нумай шухăшлаттарчĕ. Эпир, нимĕç салтакĕсем, Германире пăлхану пулса иртме кирлĕ тесе шутлатпăр. Анчах та хамăрăн шухăш-кăмăлсене каласа пама пултараймастпăр: йĕри-тавраx шпионсем. Эсэсовецсем илтсессĕн çавăнтах персе пăрахаççĕ. Каялла чакни салтаксен шухăш-кăмăлĕсене начарлатрĕ. Юлашки кунсем хушшинче темиçе офицер хăйсене хăйсемех вĕлерчĕç. Салтаксем те час-часах çухалма тытăнчĕç. Вĕсен ăçта çухалнине никам та пĕлмест, те тыткăна парăнаççĕ, те тараççĕ. Ун пеккисем ытларах та ытларах йышланса пыма пуçларĕç».

* * *

Нимĕçсен обер-ефрейторĕ Вилли Гартунг çумĕнче вăл хăйĕн йăмăкĕ патне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Çырура çапла каланă: «Эрне хушшинче манăн 17 юлташ пĕтрĕ. Аманнисем питĕ нумай. Мана, артиллериста, пехота чăсне ячĕç, мĕншĕн тесен эпир пĕтĕм орудисене çухатса пĕтертĕмĕр. Эпир кунта мĕн курса ирттернине пĕтĕмпех çырса кăтартма иепле те май çук».

* * *

Нимĕçсен фашистла бандичĕсем Калинин облаçĕнчи Погорельск районĕнчи Дурнево ялĕнче Некрасов колхозникпа унăн арăмне вĕсен пĕчĕк ачи Шура хăйсем патĕнчи нимĕç салтакĕсен пĕр коробка спичкине илмĕшĕнех çакса вĕлернĕ.

* * *

Хĕвелтухăç Казахстанри горнякĕсем тăхлан рули кăларас ĕçе куçран кунах ӳстерсе пыраççĕ. Юлашки вăхăтра Лениногорск рудникĕнче ĕç тухăçлăхĕ тĕлĕшпе чаплă рекордсем тунă. Бурщик Николай Добродеев хăйĕн сменăри заданине 3.870 процент, Прасковья Казакова 2.780 процент, Анна Давыдченко 2.400 процент тултарнă.

Февралĕн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче, Информбюро февралĕн 2-мĕшĕнче пĕлтернĕ пек противникăн 3 транспортне хăйсен мĕнпур водоизмещенийĕпе 8.800 тонна чухлĕ мар, 14.800 тонна чухлĕ путарнă.

* * *

Селезнев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсем (Хĕвеланăç фрончĕ), противникăн оборона рубежĕсене çĕмĕрсе кĕрсе, халăх пурăнакан 6 пункта йышăннă. Д. ялĕшĕн пынă çапăçура кăна тăшман хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсене 70 çынна çухатнă тата 4 оруди пăрахса хăварнă. Тепĕр участокра нимĕçсем пирĕн пĕр стрелковăй чăсa хирĕç контратака тума хăтланнă. Артиллери подразделенийĕн командирĕ Александр Васильевич Чапаев — чаплă полководецăн ывăлĕ — тăшман çине артиллерирен тăвăллăн пеме пуçланă. Противник, хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна яхăн çухатса хăварса, тарнă.

* * *

Калинин фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чăçсем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 5 пункта ирĕке кăларнă тата нимĕçсенне 27 танк, 5 оруди, 8 пулемет пĕтерсе тăкнă. Çав операцисем вăхăтĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 5.200 çын вилнĕ тата аманнă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинче противникăн йывăçпа çĕртен купаласа тунă 27 огневой точкине çапса аркатнă, 6 пулеметне тата 3 минометне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 400 çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç çапăçса летчик-лейтенант Бочаров паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă. Бочаров юлташăн самолетне нимĕçсен 3 истребителĕ атакăланă. Сывлăшри çапăçура хăюллă летчик нимĕçсен 2 самолетне çапса антарнă, виççĕмĕш машинине сиенленĕ. Бочаров юлташăн самолечĕ хăйĕн базине ăнăçлăнах таврăннă.

* * *

Орел партизанĕсен М. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен тылĕнче хăюллăн кĕрешет. Çав отрялăн çапăçури ĕçĕсем çинчен калакан çырусене кĕскен илсе пичетлетпĕр:

«Подрывниксен Ч. юлташ пуçпулса тăракан группи кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ. Ку çул тăрăх нимĕçсем фронта боеприпассем турттарнă пулнă. Подрывниксен çав группиех гитлеровецсем оккупациленĕ пысăк пунктсем хушшинчи çыхăнăва пĕтерсе тăкнă.

Партизансен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан групги фашистсен обозĕ çине пырса тапăннă, нимĕçсен хуралне пĕтерсе тăкса, тĕрлĕрен япаласем тиенĕ 13 лава тытса илнĕ. Çав япаласем вырăнти халăхран çаратнă ĕçкерсем пулнă.

Икĕ кун хушшинчи çапăçура партизансен отрячĕ нимĕçсенчен халăх пурăнакан 2 пункта тытса илнĕ. Гитлеровецсем çав ялсене партизансенчен каялла туртса илме хăтланни ăнăçсăр пулнă. Фашистсен вилсе тата аманса нумай салтакĕсем пĕтнĕ».

Кĕске вăхăт хушшинчи çапăçусенчех М. юлташăн отрячĕ нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 149 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, 5 автомашинăна тата бензин тултарнă 3 цистернăна пĕтерсе тăкнă, 19 кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ. Тăшманăнне 31 винтовка, 2 пулемет, 16.000 патрон, 1 миномет, 4 автомат, 2 радиоприемник, 13 лав тата ытти тĕрлĕ çар снаряженийĕ тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 6-мĕш танковăй дивизийĕн 6-мĕш мотопехотнăй батальонĕнчи 2-мĕш ротăри салтака Вильгельм Маазена декабрĕн 19-мĕшĕнче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне янă пулнă. Халăх пурăнакан пĕр пунктра ăна пирĕннисем тыткăна илнĕ. Унта вăл хăйĕн подразделенийĕпе пĕрле нимĕçсен гарнизонне пулăшма пынă пулнă. Маазен çапла каласа панă: «6-мĕш танковăй дивизин танкĕсем пĕтĕмпех пĕтнĕ, халĕ ĕнтĕ çак дивизи пехотăн соединенийĕ вырăнĕнче кăна тăрать. Салтаксем питех те ывăнса çитнĕ, вĕсем вăрçă пирки ӳпкелешеççĕ, вĕсем çак вăрçă Германишĕн ыррăн пĕтессине шанма пăрахнă. Германире Гитлера хирĕç ӳсĕн тухса калама никам та хăяймасть, анчах çапах та Гитлерăн вăрă-хурахла политики пирки тарăхнисене çынсем вăрттăн та пулин палăртаççĕ».

* * *

Нимĕç ефрейторĕ Трой хăйĕн пиччĕшĕ Вальтер Трой лейтенант патне çырнă, анчах ярса ĕлкĕреймен çырăвĕнче çапла каланă: «Сивĕсем кунта 30 градуса çитеççĕ. Салтаксенчен çурри ытла урисене тăм илтерсе янă. Пыйтăсем пире шалтах халран ячĕç».

* * *

Гитлерла бандитсем Курск облаçĕнчи Советски районри Кшень ялне çунтарса янă. Пĕтĕмпе 114 кил çунса кайнă. Нимĕç салтакĕсем ял çыннисене пушара сӳнтерме ирĕк паман, хăйсен куçĕ тĕлне кам тĕл пулнă, çавсене нимĕçсем пурне те пере-пере пăрахнă. А. З. Антонова гражданка хăйĕн ывăлне çунакан çуртран çăлса тухнă чухне нимĕç бандичĕсем унăн икĕ çулти ачине йывăр амантнă.

* * *

Югослави партизанĕсем Войнич хулинче итальянецсен 4.000 çынтан тăракан гарнизонне хупăрласа илнĕ. Оккупантсем унка татса тухма хăтланнисем пурте ăнăçсăр пулнă, итальянецсен çакăнта темиçе çĕр çын вилсе пĕтнĕ. Партизансем енне хăйсен хĕçпăшалĕсемпех 120 салтак куçнă. Çав салтаксене нимĕçсем Люксембургра мобилизацилесе, Югославири партизанла движение пусарса лартма янă пулнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

А. П. Чекалин юлташа Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан партизанла кĕрешӳре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн Александр Павлович Чекалина, Ленин орденĕ тата «Золотая Звезда» медаль парса, Совет Союз Геройĕн званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 4-мĕш.

Хăйсене палăртнă партизансене наградăлани

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1942 çулти февралĕн 4-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, нимĕç захватчикĕсене хирĕç тăшманăн тылĕнче пыракан партизанла кĕрешӳре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн:

Ленин орденĕпе — **П. С. Макеева, Е. И. Осипенкона, Д. У. Тетерчева,**

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе—4 çынна,

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе—4 çынна,

«Знак почета» орденĕпе—10 çынна,

«За отвагу» медальпе—21 çынна,

«За боевые заслуги» медальпе—17 çынна наградăланă. (ТАСС).

Шверник юлташ Лондонри массăллă митингра тухса каланă сăмах

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕш. (ТАСС). Нумаях пулмасть Лондонра массăллă митинг пулнă. Çав митингра совет профсоюзĕсен делегацийĕн руководителĕ Шверник юлташ сăмах тухса каланă.

Хăйĕн сăмахĕнче Шверник юлташ çапла каланă:

— Юлташсем! Совет Союзĕнчи рабочисенчен, работницăсенчен, служащисемпе интеллигенцирен сире тăванлă çулăмлă салам калатăп. **(Алă çупаççĕ).**

Тăватă эрнене яхăн ĕнтĕ совет профсоюзĕсен делегацийĕ Англире пурăнать. Тред-юнионсен генсовечĕ ăшшăн йышăннине пула, унăн руководителĕсем делегаци ĕçне ăнăçлăн йĕркелесе пырассишĕн тăрăшнине пула, совет профсоюзĕсен делегацийĕ Великобританири тĕрлĕ хуласенчи профсоюзсен вунпĕр конференцийĕн ĕçĕсене хутшăнма, утмăла яхăн фабрикăсемпе заводсенче, карапсем тăвакан верфьсемпе шахтăсенче пулса курма тата çавсенче хĕрĕхе яхăн митинг туса ирттерме пултарчĕ.

Делегаци рабочисемпе работницăсем пур çĕрте те кăмăллăн кĕтсе илчĕç, предприятисен администрацийĕсем ăна кăмăл тума тăрăшрĕç.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ рабочисемпе, работницăсемпе, профсоюз организацийĕсен ĕçлĕ çыннисемпе тĕл пулнисем Великобританипе Совет Союзĕнчи рабочи класс хушшинчи туслăха, Британипе Совет Союзĕнчи профсоюзсем хушшинчи туслăха питĕ те лайăх кăтартса пачĕç. **(Алă çупаççĕ).**

Çак туслăх, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем, уйрăмах Совет Союзĕнчи халăхсем, хаяр испытани тытнă кунсенче пуçланса кайнипе татах та паллă вырăн йышăнса тăрать. Гитлерла Германин çавтери пысăк вăрçă машини пырса çапнин мĕнпур йывăрлăхне Совет Союзĕнчи халăхсен тӳссе ирттерме тиврĕ. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Гитлерла Германи Европа тăрăх хăйĕн вăрă-хурахла похочĕсене ăнăçлăн туса çӳрени нумай халăхсен шухăш-кăмăлĕсенче нимĕçсен фашистла çар атти умĕнче хăраса тăрас туйăмсем, Гитлерпа унăн çарне тивĕçлĕ отпор пама пултаракан вăйсем пуррине шанмасăртарах тăрас туйăмсем вăратрĕ. Çитменнине тата нимĕçсен фашистла çарне çĕнтерекенни çук, кирек епле тăшмана та вăл çиçĕм пек хăвăрт пырса çапса пĕтерме пултарать текен халлапа сарас тĕлĕшпе гитлерла пропаганда хăй те сахал мар ĕçленĕ. Чăнах та ĕнтĕ, Европăри чылай çĕршывсенче Гитлерăн çарĕ умĕнче нумай çарсем хăйсен хĕçпăшалĕсене аларан пăрахрĕç. Совет Союзĕн Хĕрлĕ Çарĕ тĕлĕшпе те урăхла мар, шăпах çакăн пек пулать, тесе шутланă Гитлер.

1941 çулти июнĕн 22-мĕшĕнче пирĕн мирлĕ пурнăçа юратакан çĕршыв çине ултавлăн, вăрă-хурахла тапăнса, Гитлер вăрçă пĕр-ик уйăх хушшинчех вĕçленĕ, нимĕçсен çарĕ Урала çитиччченех маршпа утса тухĕ, çапла вара Совет Союзне аркатса тăкăпăр, унăн халăхĕн пĕр пайне вĕлерсе пĕтерĕпĕр, тепĕр пайне нимĕç баронĕсемпе помещикĕсен чурисем туса хурăпăр, тесе пĕтĕм тĕнчене мухтанчăкла пĕлтерчĕ.

Совет халăхне хирĕç Гитлер питĕ пысăк, çавтери вăйлă хĕçпăшалланнă çар кăларса тăратрĕ.

Нимĕçсен çарĕн танксемпе, тупăсемпе, самолетсемпе, минометсемпе тата хальхи вăхăтри вăрçăн ытти средствисемпе хĕçпăшалланнă икçĕре яхăн дивизийĕ Совет Союзĕн таса чикки урлă каçса, рабочисемпе хресченсен мирлĕ ĕçне пăсрĕç, хуласемпе ялсене çаратма, çунтарса яма, хурах пусма тытăнчĕç.

Çав кунсем ĕнтĕ мĕнпур совет халăхĕшĕн чи йывăр кунсем пулнă.

Кĕтмен çĕртен пырса тапăнни тăшманшăн яланах усăллă пулать, кун пек чухне тăшман, чи малтанах, пуçарулăха хăй аллине çавăрса илет. Анчах та совет халăхĕ шикленсе ӳкмерĕ, çухалса каймарĕ. (**Тăвăллăн алă çупаççĕ**). Тăшман вăйĕ, пиншер танксемлĕ, самолетсемлĕ тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшаллă, нумай миллионлă çар ăна хăратса ӳкермерĕ.

Çак вăрçă, совет халăхĕ отечественнăй аслă вăрçă тесе ят панăскер, пуçланнă малтанхи кунсенченех совет халăхĕ, ылханлă тăшмана тĕппипех аркатса, пĕтерсе тăкиччченех кĕрешме, хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме, хăйĕн ретне совет правительстви тавра **(алă çупаççĕ)**, хăйĕн çулпуçĕ Сталин юлташ тавра татах та таччăнрах пĕтĕçтерчĕ. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).** Совет халăхĕ пулас кĕрешĕвĕн мĕнпур йывăрлăхĕсене пĕлсе тĕрĕс хакларĕ, тăшман вăйлă та ултавлине, кĕрешӳ питĕ пысăк жертвăсемпе чăтăмлăх ыйтнине пĕлсе тăчĕ.

Совет халăхĕн, пирĕн çĕршыври тӳрĕ кăмăллă кашни гражданинăн мĕн тумаллине, пирĕн умра мĕнле задачăсем тăнине Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче чĕнсе каланă хăйĕн историллĕ сăмахĕнче каласа панă. Çĕршывра мĕнле лару-тăру пулса тăнине, çарпа флот умĕнче мĕнле задачăсем тăнине, пĕтĕм халăх умĕнче мĕнле задачăсем тăнине Сталин юлташ сăмахĕ пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартса панă. Çак задачăсене кĕскен çапла татса каланă: пур совет çыннисен те хăйсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса йĕркелемелле, кĕрешме тата тăшмана çĕнтерме мĕнпур ĕçе йăлтах фронт нушисене пăхăнтармалла. Çапла ĕнтĕ пирĕн çĕршывра тылпа фронт хушшинче иксĕлми çирĕп çыхăну пулса пычĕ, тылпа фронтăн пĕрлĕхĕ пулса тăчĕ. **(Алă çупаççĕ).**

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе пынă вăхăтра фронтпа тыл хушшинчи çыхăну кунран кун çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленсе пычĕ, паян ĕнтĕ пирĕн çĕршыв кĕрешме çеç, çĕнтерме çеç хатĕр тăракан пĕрлĕхлĕ боевой лагерь пулса тăрать. **(Алă çупаççĕ).**

Çапла ĕнтĕ гитлерла Германия хăйĕн çиçĕм пек хăвăрт аркатса тăкмалли планĕсемпе Совет Союзĕнчи халăхсен ĕмĕр арканми хăватлă пĕрлĕхĕ, çирĕп пĕтĕçĕвĕ çине пырса тăрăнчĕ. Гитлер та, унпа пĕр шутлă пулса вăрă-хурахла ĕçсем тăваканнисем те пирĕн çĕршыва чуралантарас тĕлĕшпе хăйсен вăрă-хурахла планĕсене тунă чухне çакна шута илмен. Гитлерăн çав планĕсем вăрçă пуçламĕшĕнчех арканса кайрĕç. Гитлерла Германия хăйĕн çарĕн командованийĕ пекех, хăйĕн çарне çĕнтерекенни никам та çук тесе каппайса шухăшланăскер, паттăрлăхпа хăюлăх тĕлĕшĕнчен никам та танлашма пултарайман çарсене чи малтан Совет Союзĕнче тĕл пулчĕ. **(Алă çупаççĕ).** Чăнах та ĕнтĕ, гитлерла бандитсем хăйсене çавтери хаяррăн курайманнине, юлашки юн тумламĕ юлмиччченех çапăçма хатĕр тăракан пĕччен-пĕччен паттăрсене мар, пĕтĕмĕшлĕ çара, рабочисемпе хресченсен миллионлă çарне ăçта, хăш çĕршывра тĕл пулнă?

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем, командирĕсемпе политработникĕсем тунă тата халĕ те тăвакан паттăрла пур ĕçсем çинчен те каласа пама та май çук. Çакăн пек паттăрла ĕçсем тума Хĕрлĕ Çара хамăрăн çулпуç тата полководец ертсе хавхалантарса пырать. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).** Çавăнпа та мана паттăрла ĕçсем çинчен калакан ик-виç тĕслĕх илсе кăтартма ирĕк парăр. Çав паттăрла ĕçсем ĕнтĕ уйрăм çынсен боевой пахалăхĕпе тивĕçлĕхĕ кăна мар, мĕнпур Хĕрлĕ Çарăн тивĕçлĕхĕ пулса тăраççĕ. Акă, Мускав оборонин мухтавлă та ĕмĕр манăçа тухми кунĕсенче, тăшман çавтери вăйлăн хĕссе пынă вăхăтра, 28 гвардеец тунă паттăрла ĕçсенчен пĕри. Мускав çинелле тапăнса пыракан нимĕçсен фашистла йыткĕтĕвĕсен çулне пӳлме совет халăхĕн ывăлĕсем хăйсен кăкăрĕсемпе тăнă. Çапăçу кунĕсенчен пĕринче Мускав патĕнче паттăрсен вилĕмĕпе пуçне хунă Панфилов генералăн ячĕпе тăракан дивизири 29 гвардеец йышăннă рубежсем çине тăшманăн 50 ытла танкĕ çĕмĕрсе килме пуçланă. Фашистсен танкĕсем пирĕн боецсем пытанса ларнă окопсем патнех çывхарса пынă. 29 боец танксен çĕмĕрсе килекен ушкăнне хирĕç тăни ухмахла ĕç тунă пек туйăнма пултарнă. Броньăпа витĕннĕ 50 тискер кайăкпа 29 боец хушшинче мĕнле çапăçу пуласси çинчен хăвăр шутласа пăхăр-ха ĕнтĕ. Кунашкал танмар çапăçусем мĕнле вăрçăра, хăш саманара пулма пултарнă! Иртнĕ вăрçăсен историйĕ паттăрлăхăн кун пек тĕслĕхĕсене пĕлмест. Анчах та совет боецĕсем, пирĕн мухтавлă та тăван тата халăх юратакан боецсем хăраса ӳкмен, вĕсем çапăçу пуçласа янă. **(Алă çупаççĕ).** 29 çынран пĕр çынăн çеç сехри хăпнă. Нимĕçсем, çăмăллăнах çĕнтерӳ тума шанса тăнăскерсем, гвардеецсене: «Парăнăр», тесе кăшкăрсан, пĕр çын çеç аллисене çӳлелле çĕкленĕ. Залп янăраса кайнă. Темиçе гвардеец, команда памасăрах, малтан калаçса татăлмасăрах, хăравçă çине, сутăнчăк çине пĕр харăс персе янă. Çакă ĕнтĕ халăхăн залпĕ, тупа тунине пăснăшăн айăплани пулнă.

Политрук Днев: «Пĕр утăм та каялла чакмалла мар», тесе лăпкăн команда панă хыççăн, танмар çапăçу пуçланса кайнă.

Гвардеецсем танксене хирĕç пемелли хĕçпăшалсенчен пĕр танк хыççăн тепĕрне пере-пере пăрахнă, çунакан шĕвек тултарнă бутылкăсем ывăтса танксене вут тивертсе янă. Анчах паттăрсем те пĕрин хыççăн тепри стройран тухса пынă. Чи хăрушă минутăсенче те, вилĕм вĕсен куç хупанкисене хупăнтарма тытăннă вăхăтра та, боецсем юлашки вăйхалне пухса тăшмана пыра-пыра çапнă. Çапăçу 4 сехет ытла пынă. Фашистсен броньăпа витĕннĕ чăмăрĕ 28 гвардеец хӳтĕлекен рубеж урлă татса каяйман. Çапăçу хирĕнче фашистсен çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ, вырăнтан тапранайми пулнă 18 танкĕ выртса юлнă. **(Алă çупаççĕ).** Анчах гвардеецсен речĕсем сайралнă, боеприпассем пĕтсе çитнĕ, гранатăсем те текех пулман. Тăшман окоп патне çывхарса пынă. Нимĕçсем, паттăрсене чĕрĕлле тыткăна илсе кайран асаплантарса вĕлерес тесе пулас, люксенчен сике-сике тухнă. Вырăссен ваттисем каланă сăмахĕсенчен пĕринче: «Çапăçу хирĕнче пĕр çын воин мар», тесе каланă. Советăн çĕнĕ пурнăçĕ çапла кăтартса парать: çапăçу хирĕнче, вăл совет воинĕ пулсан, пĕр çын та воин пулса тăрать. **(Алă çупаççĕ).** Днев политрук чĕрĕ юлнă юлташĕсене хăй тавра пĕтĕçтернĕ те юнлă хаяр çапăçу çĕнĕрен пуçланса кайнă. Çак çапăçура 28 паттăр пурте хăйсен пуçĕсене хунă. Вĕсем вилнĕ, анчах тăшмана ирттерсе яман. Пирĕн вăйсем çитнĕ те противникăн танковăй группине тытса чарнă. Хамăрăн тăван Мускавшăн, хамăрăн тăван çĕршывшăн, фашистла тиранин пусмăрĕ айĕнче асапланакан миллионшар çынсене ирĕке кăларассишĕн советăн 28 çынни çапла пуçĕсене хунă. Çапла ĕнтĕ, шухăшлăр-ха, юлташсем, çакăн пек армие, çакăн пек халăха, çак мухтавлă 28 гвардеец пекех хăрама пĕлмен, паттăр халăха парăнтарма май пур-и вара? Çакăн пек халăха çĕнтерме çук. **(Алă çупаççĕ).** Çакăн пек халăх вăл— халăх-герой, çакăн пек халăх вăл— çĕнтерме çеç пултаракан халăх, вăл çĕнтеретех. **(Нумайччен алă çупаççĕ).**

Акă, геройлăхпа хăюлăхăн, вилĕмрен хăрамасăр кĕрешнин тата тăван çĕршывшăн вилме те хатĕр тăнин татах тепĕр тĕслĕхĕ. Ку ĕç те çавнашкалах Мускав оборонин чаплă кунĕсенче пулнă. Хаяр çапăçу пынă. Хĕрлĕ Çарăн подразделенийĕ, тăшман флангран вăйлăн персе тăнине пула, малалла питĕ йывăррăн куçса пынă. Çакă ĕнтĕ фронтăн пĕр участокĕнче пирĕн войскăсен наступленине чарса лартассипе хăратнă. Вара рядовой боец Сосновский, çапăçу обстановкине тĕрĕс шута илсе, тăшманăн ДЗОТ-чĕ патне шуса пынă та хăйĕн кĕлеткипе тăшманăн пулеметне çĕр çумне лапчăтса хурса, амбразурăна хупăрласа лартнă. Пулемет кĕпçинчен пĕрхĕнсе тухакан пульăсем боецăн кăкăрне шăтарса пĕтернĕ. Анчах фашистсен пулемечĕ те паттăр патриотăн юнĕпе чыхăнса ларнă. Çакăн хыççăн вара тăшманăн рубежне тытса илнĕ.

Юлашкинчен татах тепĕр тĕслĕх кăтартса парам. Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Гудз лейтенантăн танкĕ пехотăн атакине пулăшу пама васканă. Çул çинче хăватлă совет танкĕ фашистсен 18 танкĕпе тĕл пулнă. Лейтенант «Çапăçу пуçлатпăр» тесе чĕнсе каланине мĕнпур экипаж пĕр харăс ырланă. Советăн пĕр танкĕпе фашистсен 18 танкĕ хушшинче хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Пĕччен—вунсаккăра хирĕç. Совет танкĕ противникăн танкĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне стройран кăларнă. Çапăçу хирĕнче часах нимĕçсен çунтарса янă тата персе сиен тунă танксен хисепĕ вунна çитнĕ. **(Алă çупаççĕ).** Тăшманăн юлашки 8 танкĕ тарса çăлăннă. Танксене аркатса тăкнă хыççăн, совет танкĕн паттăр экипажĕ тăшманăн оборонин малти хĕрри патне кайнă, кунта вăл тăшманăн танксене хирĕç пемелли орудисен 4 батарейине таптаса лапчăтнă. Çак вăхăтра пирĕн мухтавлă пехотинецсем тăшмана хĕснĕçемĕн хĕссе пынă, тăшман совет войскисем хĕснине чăтаймасăр тарма тытăннă. Танк чакакан тăшмана хăваласа пуçланă, ăна гусеницăсемпе таптанă, пулеметран пере-пере пăрахнă. Çапăçу хирĕнче гитлерла бандитсен 400 вилли выртса юлнă. Вĕсем ĕнтĕ Мускава çеç мар, Берлина та текех нихăçан та кураймĕç. **(Кулаççĕ, алă çупаççĕ).** Çапăçура танка 26 çĕртен сиен тунă пулин те, машинăн паттăр экипажĕ çапăçу вĕçленичченех çапăçу хирĕнчен тухман, пехотăна питĕ ăнăçлăн пулăшса пынă.

Эпĕ хамăрăн паттăр летчиксем çинчен пĕр-ик сăмах та пулин каламасăр ирттерсе кайма пултараймастăп. Çак хăрама пĕлмен соколсем ĕмĕрлĕхех чапа тухрĕç. Пĕр Мускав çывăхĕнче кăна вĕсем фашистсен пиншер пирачĕсене пĕтерсе тăкрĕç. Çакăнта мухтавсăр вилĕм тупнă пиратсем гитлерла авиацин чи паха кадрĕсем пулнă. Нимĕçсен самолечĕсен пĕтерсе тăкнă экипажĕсем хушшинче тимĕр хĕреспе наградăламан летчиксем питĕ сайра-хутра çеç тĕл пулкаланă. Хăшпĕрисене пĕр тимĕр хĕреспе çеç мар, темиçе тимĕр хĕреспе те наградăланă. Çав хĕрессем ĕнтĕ Лондон çине бомбăсем пăрахнăшăн, Ливерпулĕн кварталĕсене ишĕлтерсе пĕтернĕшĕн Гитлер панă наградăсем, çавсем ĕнтĕ Англин пиншер гражданĕсене вĕлернĕшĕн, стариксен, хĕрарăмсемпе ача-пăчасен куççулĕпе юнĕшĕн панă наградăсем пулнă.

Хамăрăн тăван çĕршывшăн, пирĕн ишĕлтернĕ хуласемпе ялсемшĕн, Лондоншăн, Бирмингамшăн, Ковентришĕн, Англири тата ытти хуласемшĕн те пирĕн мухтавлă та хăрама пĕлмен летчиксем тăшмана таварма тытăннă, ылханлă тăшмана тавăрассине совет халăхĕ вĕç-

Юлашки 2-мĕш страницăра

Шверник юлташ Лондонри массăллă митингра тухса каланă сăмах

(ЮЛАШКИ)

че çитиччченех туса çитерет. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Хĕрлĕ Çарăн çакăн пек паттăрла ĕçĕсем Мускав патĕнче кăна мар пулса пыраççĕ. Инçетри çурçĕрте те, Мурманск фронтĕнче те, пирĕн мухтавлă тăван Ленинград патĕнче те, Украинăри çеçен хирсенче те, Хура тинĕсĕн çыранĕсенче те çавнашкалах паттăр ĕçсем пулса пыраççĕ. Çак паттăрла ĕçсене пирĕн Хĕрлĕ Çарăн чакма тивнĕ чухне те, чакнă май тăшмана халран ярса пынă чухне те тунă. Вăрçăн ултă уйăхĕ хушшинче тăшман хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсене 6 миллион çынна ытла çухатрĕ. Çавнашкал паттăрла ĕçсене пирĕн çар халĕ те туса пырать. Пирĕн çар, халĕ фашистла оккупантсенчен ял хыççăн ял, хула хыççăн хула ирĕке кăларса, нимĕçсен фашистла бандичĕсене икĕ уйăх хушши ĕнтĕ умран та, хыçран та пыра-пыра çапать. (Алă çупаççĕ).

Нимĕçсен фашистла çарне çĕнтерме пултараканни çук текен халлапа сирсе янă пирĕн çар, тăшман питĕ вăйлăн хĕснине 6 уйăх хушши чарса тăнăскер, юлашкинчен, пур фронтсенче те контрнаступлени тума пуçланăскер, ăçтан вăй-хăват илсе тăрать-ха? Çак вăй-хăвата мĕнпур совет тылĕ парса тăрать. Çирĕп тылсăр вăйлă çар пулма пултараймасть, çĕнтерÿ пулма пултараймасть. Пирĕн çĕршывра фронтпа тыл пĕрлĕхли çинчен эпĕ малтах каланăччĕ. Тылпа фронт, халăхпа çар пĕр тĕллевпе—тăшмана аркатса, пĕтерсе тăкас тĕллевпе пурăнаççĕ. (Алă çупаççĕ).

Боецсем фронтра тăвакан паттăрла ĕçсем çине тыл хастарлă кĕрешÿпе, фабрикăсемпе заводсенчи паттăрла ĕçсемпе, мĕнпур вăя хурса ĕçленипе ответ парать. Йăлтах фронт валли, йăлтах тăшмана çĕнтерес ĕç валли—çакăн пек ĕнтĕ тылри совет çыннисен çулăмлă девизĕ. (Алă çупаççĕ). Çаксем вĕсем сăмахсем мар, совет çыннисен ĕçĕсем. Темиçе тĕслĕх кăтартса пама ирĕк парăр. Оборона валли ĕçлекен заводсенчен пĕринче Дмитрий Соколов стахановеца мастер васкавлă заказ панă. «Срокĕ — вунă кун»,—тенĕ мастер, çавăнтах çапла хушса хунă: «Хăвах пĕлетĕн, мĕн чухлĕ хăвăртрах, çавăн чухлĕ лайăхрах, заказĕ фронт валли вĕт». Кăнтăрла апат вăхăтĕнче Соколов киле çакăн пек хут янă: «Паян та, ыран та ан кĕтĕр. Ĕçе пĕтерсен пыратăп». Ĕç хушшинчи кану вăхăчĕпе те Соколов туллин усă курман. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче пĕр сехет канмалла. Соколов ку вăхăтăн 25 минучĕпе çеç усă курнă. Çапла вăл висĕ смена ĕçленĕ, çакăн хыççăн мастер, Соколова канма хушса, ÿкĕтлеме хăтланса пăхнă. «Мана канăç кирлĕ мар», —тесе тавăрнă Соколов. Пиллĕкмĕш смена пĕтес умĕн вăл заказа туса панă. (Алă çупаççĕ). Соколов çакăн хыççăн та, тепĕр смена пуçланас умĕн, ĕçе тухнă. Пахалăхĕ енчен çак заказран каях мар ытти заказсене тунă чухне те çакăн пекех ĕçленĕ. Заказсене вăл мастер кăтартса панинчен пилĕк хут хăвăртрах туса хатĕрленĕ. Цехри рабочисем Соколова «боевик» тесе ят панă.

Хăюлăхăн акă тепĕр тĕслĕхĕ. Ленинград патĕнчи чугунçул станцийĕсенчен пĕрин тĕлĕнче вăхăт çурçĕр çитеспе фашистсен самолечĕсен моторĕсем кĕрлеме пуçланă. Çар грузĕсем тиенĕ эшелон тăракан чугунçул линийĕ çинче фугаслă йывăр бомбăсем çурăла-çурăла кайнă. Кашни минутăрах катастрофа пулма пултарнă. Паровоз çывăхнех ÿкнĕ пĕр бомбăн ванчăкĕпе машинист аманнă. Положени ытларах та ытларах хăрушăланса пынă. Анчах аварийно-восстановительнăй бригадăн руководителĕ Степан Борзых çухалса кайман, вăл машинист будкине сиксе хăпарнă та паровоза состав патне илсе пынă. Борзых состава паровозпа пĕрлештернĕ самантра бомба çурăлса кайнă та, ăна сывлăш хумĕ буфер çумне пырса çапăнтарнă. Бригадăн пит-куçĕ тăрăх юн шăпăртатса юхнă. Борзых ыратнине чăтса, хăйне мĕнле хăрушлăх хупăрласа килнине манса кайса, состава паровозпа пĕрлештернĕ те эшелона тĕп çул çинчен илсе тухнă. (Алă çупаççĕ). Бомбăсем ÿкекен зона хыçала тăрса юлсан, Борзых вагонсенчен пĕри çунма пуçланине курнă. Вăл поезда тормоз парса чарнă та, вагонсем çийĕпе çунакан вагон патне чупса пырса, пушара хирĕç пĕр пĕччен кĕрешме пуçланă. Çил çулăма аяккалла илсе кайнă. Борзых вагон çивиттинчи шуçа алăпа туртса сÿме тытăннă. Унăн аллисем пиçсе кайнă. Борзых çак пушара сÿнтерме ĕлкĕрнĕ çеç, çĕнĕ пушар сиксе тухнă: боеприпассем хунă йывăç ещĕксенчен пĕри çунма пуçланă. Борзых вагон ăшне сиксе кĕнĕ те хăйĕн ваткăллă курткипе хупăрласа çунма пуçланă ещĕке сÿнтернĕ. Çак вăхăт тĕлнелле станцирен рабочисем пырса çитнĕ, Борзых тăнне çухатнă. Анчах çапах та вăл хăрушлăха сирсе янă, эшелона бомбăсем ÿкекен зонăран илсе тухнă, пушара сÿнтернĕ, çапла вара эшелона фронта, Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем тăшмана аркатнă çĕре, яма сыхласа хăварнă. (Алă çупаççĕ).

Гитлерла бандăсене хирĕç фронтри боецсем кăна мар, çавнашкалах Совет Союзĕн тылĕнчи рабочисемпе работницăсем те, инженерсемпе техниксем те кĕрешеççĕ. Тăшман вăхăтлăха хуçаланакан пур вырăнсенче те совет халăхĕ тăшмана канăç памасть, унăн коммуникацийĕсене, çыхăнăвĕсене аркатса пырать, унăн склачĕсемпе аэродромĕсене вут тивертсе çунтарса ярать. Партизан! Çак сăмах тăшмана мĕнтери хăрататать, ăна тăшмансем мĕнтери курайманассĕ! Партизансем вĕсем — кăнтăрла та, çĕрле те, фронт çывăхĕнче те, тăшманăн шалти тылĕнче те нимĕç бандичĕсене пĕр канăç та паман питĕ хăватлă вăй пулса тăраççĕ. Мĕнпур паттăр та мухтавлă ĕçсем çинчен каласа та пĕтерес çук. Ăнланмалла пултăр тесе, эпĕ партизанла отрядсен командирĕсенчен пĕри именерех, мухтанмасăр кĕскен çырса пынă пĕр дневника илсе кăтартас тетĕп. Çав дневникра акă мĕн çинчен каланă: Январĕн 6-мĕш: çул çинче нимĕçсен груз турттарса пыракан 2 лавне тĕл пултăмăр. Лавсене пĕтерсе тăкрăмăр. Хирĕç тăма хăтланнă 5 салтакпа пĕр офицера вĕлертĕмĕр. Январĕн 8-мĕш: противникăн телефон линине аркатрăмăр, татах икĕ лав пĕтерсе тăкрăмăр; нимĕçсене хирĕç пуçланса кайнă çапăçура 5 салтакпа 2 офицера вĕлертĕмĕр. Январĕн 9-мĕш: засадăра пытанса ларнă çĕртен нимĕçсен çула хурал тăракан 6 салтакĕпе пĕр офицерне вĕлертĕмĕр. Январĕн 11-мĕш: тăшманăн 100 лавран тăракан обозĕ çине тапăнтăмăр, автоматсемпе винтовкăсенчен персе 5 нимĕçе вĕлертĕмĕр, боеприпассем турттарса пыракан 2 фургона вут тивертрĕмĕр. Январĕн 12-мĕш: çыхăну кабелĕн икĕ сыпăкне татса илтĕмĕр. Тепĕр вырăнта çыхăну линине 600 метр тăршшĕ аркатса тухрăмăр; нимĕçсен 3 салтакĕпе пĕр офицерне вĕлертĕмĕр; çулăн темиçе участокĕ çине минăсем лартса тухрăмăр.

Хĕрлĕ Çарпа халăх пĕрлĕхлĕ пулсан та, партизансем — паттăр ĕçсем тăвакан патриотсен уйрăм ушкăнĕсем çеç пулса тăраççĕ пуль; вĕсене вăхăтлăха гитлеризм пусмăрĕ айне кĕрсе ÿкнĕ совет халăхĕ пулăшса пымасть пуль, тесе шухăшлаççĕ-и тен хăшпĕрисем. Партизансем вĕсем — паллах, хăюллă çынсен ушкăнĕсем. Анчах та вăл çынсене те халăх, Хĕрлĕ Çара пулăшса пынă пекех, пулăшу парса пырать.

Шăлах çакăн пирки ĕнтĕ нимĕç военщини партизанла движение пусарса лартма пултараймасть, мĕншĕн тесен халăха пăвса вĕлерсе пĕтерме май çук. Партизансене çак халăх ĕнтĕ юратса, куллен пулăшу парса пырать. (Алă çупаççĕ).

Акă сире халăх партизанла движенипе мĕнле çыхăнса тăнине кăтартса паракан пĕр факт. Нимĕçсем оккупациленĕ районсенчен пĕринче П. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ кĕрешет. Çав командирăн пĕр ячĕ кăна нимĕçсенне сехрине хăпартать. П. юлташпа унăн отрячĕ ăçта пурăннине пĕлес тесе, нимĕçсен командованийĕ мĕн-мĕн кăна туманши? Нимĕçсем карчăксемпе пĕчĕк ачасем хушшинче сутăнчăксене шыраççĕ, анчах та ун пек çынсене тупаймаççĕ. Пĕр ялти карчăка нимĕç лейтенанчĕ нумайччен допрос туса тĕпченĕ. Вăл, пĕчĕкскер, вăйран тайăлнăскер, анчах та çирĕп шухăшлăскер, лейтенанта хирĕç çирĕппĕн тăнă, хăйне панă ыйтусене вăл пурне те пĕр пекех: «Пĕлместĕп», тесе ответленĕ. Фашистла ирсĕре П. юлташпа унăн отрячĕ ăçтине шăпах ĕнтĕ çак карчăк пĕлес пек туйăннă. Лейтенант хăйĕн кĕмăлне нумайччен пусарса тăнă, карчăк партизансен отрячĕпе унăн хăюллă командирĕ П. юлташ ăçтине кăтартса парсан, ăна ĕне, укçа, çĕнĕ пÿрт пама пулнă. Анчах карчăк малтанхи пекех: «Пĕлместĕп», тесе тавăрнă. (Алă çупаççĕ). Юлашкинчен, лейтенантăн çилли тулса çитнĕ. Вăл карчăка хăшкăрса пăрахнă çеç мар, çапса та пĕтернĕ, нимĕç салтакĕсем ăна урисемпе талса урама кăларса ывăтнă. Колхозниксем карчăка илсе кĕнĕ, унăн пит-куçне юнран çуса тасатса кровать çине вырттарнă. Çĕрле пÿрте П. юлташ пырса кĕнĕ. Вăл карчăк патне пынă та пĕшкĕнсе ыйтнă: «Питĕ ыратать-и, кинеми?» тенĕ. «Ыратать»,— тесе тавăрнă лешĕ. Вăл кăшт çĕкленнĕ те ун çине пăхса илнĕ. Вăл ăна ача чухнех, П. юлташ ытти ачасемпе пĕрле ялти урам тăрăх чупса çÿренĕ кунсенчех пĕлнĕ. Вăл халĕ ун çине, тысăк, сарлака хулпуççиллĕ, илемлĕ çын çине пăхнă. «Тавтапуç сана, кинеми»,— тенĕ те П. юлташ, карчăка чуптуса илнĕ. «Кунтан ирсĕр çĕлен-калтасене, 15 çынна яхăн, çапса кăлартăмăр, авă пăх, вĕсем урамра выртаççĕ. Саншăн, чупăм, вĕсене тавăртăмăр».

Ялтан вăрмана тавăрăннă чухне командир сасартăк чарăнма приказ панă та хăй ут çинчен анса, айăккалла шуса кайнă. Темиçе минутăран отряд унăн условнăй сигналне илтнĕ. Вăрманти çул тăрăх икĕ офицер командир пулса ертсе пынипе нимĕç велосипедисчĕсен отрячĕ пынă. Фашистсене хăйсем тĕлĕнчен иртсе кăштах малалла кайма ирĕк парса, партизансем винтовкăсенчен пĕр харăс персе янă. Çĕр çинче 16 салтакпа 2 офицер выртса юлнă, ыттисем васкасах тарнă. Çак кун нимĕçсен фашистла бандичĕсене 33 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. (Алă çупаççĕ).

Партизансен отрячĕн пĕр кун хушшинчи кĕрешĕвĕн итогĕ çакăн пек ĕнтĕ. Нимĕçсен командованийĕ партизансен отрядне йĕркелес ĕç ăнăçсăр пынăшăн тарăхнипе урсах кайнă. П. юлташа тытса панăшăн вăл 20.000 тенкĕ укçан награда пама пулнă. Колхозниксем çав пĕлтерÿ пирки тарăхса хăйсем хушшинче çапла калаçнă: «Хытă нимĕç, çавăн пек çыншăн та 20.000 тенкĕ çеç парать. Ăна, пирĕн тăвана, пирĕн Совет влаçне хÿтĕлекене тивĕçлĕ миллионсем пур-и вара çут тĕнчере», тенĕ. Нимĕçсен войскисем курăна пуçласанах, П. юлташа тăшман çывăххи çинчен пĕлтерме ялсенчен улах сукмаксем тăрăх хыпарçăсем каяççĕ.

Совет халăхĕ ылханлă гитлеризма хирĕç кашни кун, кашни сехетре мĕнле паттăррăн кĕрешсе пынине кăшт та пулин кăтартса парас тесе чылай вăхăт йышăнса тăтăм. Çак кĕрешÿ ĕнтĕ 7 уйăх хушши пырать. Çавăнпа та çакăн пек ыйту тухса тăни вырăнлă ĕнтĕ: совет çыннисен, арçынсен, хĕрарăмсен, старриксемпе ача-пăчасен, Хĕрлĕ Çарпа партизанла отрядсенчи боецсен нимĕнпе те танлаштарма çук аслă героизмĕ ăçтан вăй илсе тăрать-ха? Совет халăхĕ геройлăх хăватне илсе тăракан çăлкуçĕ вăл —хăй тĕрĕс ĕçшĕн, тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешнине ăнланса илни, совет халăхне, совет стройне, хăйĕн çулпуçне Сталин юлташа вĕçĕ-хĕррисĕр юратни пулса тăрать. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).

Хĕрлĕ Çар наступлени тума пуçлани ĕнтĕ пĕр уйăх ытларах иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче Хĕрлĕ Çар тăшмана темиçе хутчен те хыттăн пыра-пыра çапрĕ. Хаçатсенчен, радиопередачăсенчен эсир темиçе пысăк хулана, стратеги тĕлĕшĕнчен паха пулса тăракан темиçе пункта ирĕке кăларнине пĕлетĕр, çавнашкалах тата эсир нимĕçсен фашистла çарĕ мĕнле пысăк çухатусем тÿсни çинчен те пĕлетĕр.

Антив гитлерла ухмахсем хăйсене те, халăха та: ку ĕнтĕ нимĕçсен войскисем хĕллехи позицисене куçас тĕлĕшпе, хĕллехи хваттерсене йышăнас тĕлĕшпе «план тăрăх» е «малтанах шутласа палăртни тăрăх» чакни пулса тăрать, тесе улталаса йăпанччăрах. Паллах, çакăн пек чакни нимĕнле план тăрăх та пулса пымасть. Хĕрлĕ Çар хăйĕн наступленине план тăрăх туса пырать. (Алă çупаççĕ).

Хĕллехи хваттерсем пирки каласан, нимĕçсем Мускаври, Ростоври, Калининри тата ытти хуласенчи ăшă хваттерсене мар, канавсемпе траншейăсенчи порлă йăва-шăтăксене ытларах юрататчĕ пулас (кулаççĕ), кунта хăйсем план тăрăх чакса пыракан çулсем çинче, вĕсен вилсе пĕтнĕ тата шăнса хытнă салтакĕсемпе офицерĕсем пиншерĕн-пиншерĕн йăваланса выртаççĕ.

Анчах та пирĕн хамăрăн ăнăçусемпе лăпланса, йăпанса ларма нимĕнле сăлтав та çук. Тăшмана питĕ вăйлăн пырса çапнă, анчах тăшмана пĕтерсе тăкман-ха. Тăшманăн халĕ вăйĕсем пур. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем, çĕнĕ наступлени организацилес тесе, хăйсен вăйĕсен юлашкийĕсене пухма хăтланаççĕ, малашне те хăтланса пăхĕç. Тăшмана çапса аркатма, ăна пĕтĕмпех пĕтерсе тăкма татах та нумай вăй хума, нумай çухатусем тÿсме тивет. Çавăнпа та совет халăхĕ кирек мĕнле демобилизациленес шухăш-кăмăлран та аякра тăрать. Пачах урăхла, совет халăхĕ тăшмана пуçĕпех çапса аркатса, пĕтĕмпех пĕтерсе тăкас тесе, ăна хирĕç кĕрешме хăйĕн вăй-халне татах та ытларах ÿстерсе пырĕ.

Пирĕн çĕршыври рабочи класс умĕнче, совет халăхĕ умĕнче çеç мар, ирĕклĕхе юрататакан пур халăхсем умĕнче те çакăн пек задачах тăрать. Ирĕклĕхе юрататакан мĕнпур халăхсем мĕн чухлĕ ытларах вăй хурса кĕрешеççĕ, тăшмана çĕнтерес вăхăт та çавăн чухлĕ хăвăртрах çывхарса килĕ. Совет Союзĕнчи рабочи класпа халăхсем умĕнче те, çавнашкалах Великобританири рабочи класпа халăхсем умĕнче те пирĕн çарсен вăрçăри вăй-хăватне татах та çирĕплетес, тăшмана аркатса тăкма фронта кирлĕ таранах пур тĕрлĕ хĕçпăшалсем те туса парас задача тăрать. (Алă çупаççĕ).

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ темиçе фабрикăпа завода кайса курни çинчен эпĕ хамăн докладăн пуçламăшĕнчех каланăччĕ. Эпир уççăнах çапла калаçса пама пултаратпăр: Великобританин промышленноçĕ лайăх ĕçлет. Производствăна йĕркелени, предприятисене техника тĕлĕшĕнчен хĕçпăшаллантарни делегацие питĕ кăмăла кайрĕ. Делегаци рабочисемпе тата работницăсемпе калаçса пăхнă тăрăх çапла вывод турĕ: Великобританири рабочи класс паянхи лару-тăру хăрушлăхне ăнланса илнĕ, хĕçпăшалсем ытларах туса кăларас тĕлĕшпе вăл мĕн кирлине пурне те тума хатĕр. Хальхи условисенче çакă ĕнтĕ ĕçе татса паракан фактор тата тăшмана çĕнтерме кирлĕ питĕ паха услови пулса тăрать.

Рабочисен пуçарулăхĕ ĕç тухăçлăхне хăпартма пулăшнине, çапла вара, ытларах продукци туса кăларма пулăшнине кăтартакан тĕслĕхсем эпир сахал мар куртăмăр. Анчах та пур фабрикăсемпе заводсем те, пур предприятисем те хăйсен ĕçĕсене чи çÿлти сыпăка ÿстерсе çитернĕ тесе, техникăран вăл мĕн пама пултарнине, йăлтах илнĕ тесе, пур çĕрте те производствăна кăтартуллă организациленĕ тесе калама çук, кун пек калани тĕрĕс мар та пулнă пулĕччĕ. Делегаци хăйĕн союзникĕсене çакăн çинчен каласа памасан, вăл хăйĕн шухăш-кăмăлĕсене тÿрĕ каласа паманни пулнă пулĕччĕ. Фактсене тĕрĕс хакласа, япаласене хăйсен ячĕсемпе каласа, делегаци çакна кăтартса пама кирлĕ тесе шутлать: Великобритани промышленноçĕнче халĕ усă курман резервсем те чылаях нумай-ха. Çав резервсене мобилизацилени, вĕсене ĕçе кĕртни танксем, самолетсем, тупăсем, снарядсем т. ыт. те ытларах туса кăларас майсене чылаях пысăклатмалла. Пирĕн шутпа, çав резервсене мобилизацилемелле; çав ĕçсене мĕн чухлĕ хăвăртрах тăватăр, вăл пирĕн пĕрлĕхлĕ ĕçшĕн çавăн чухлĕ лайăхрах пулĕ.

Производствăри вăйсене ÿстерес, ĕç тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе профсоюз организацийĕсем питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Сăмахран, эпир çакна куртăмăр: цехри старостăсем производство ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ытларах ĕçлекен предприятисенче производство енĕпе те пысăкрах ăнăçусем тунă. Çавăнпа та ĕнтĕ пирĕн паян Лондон халăхĕн митингĕнче кашнине мĕнле пысăк обязанноçсем тивнине туйса илмелле; эпир пурсăмăр та нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç, ирĕклĕхшĕн, тĕрĕслĕхшĕн вăрçă туса пыракан боецсем пулса тăратпăр. Паянхи митингра пулнă кашни çын гитлеризма хăвăртрах аркатса тăкас тĕлĕшпе вăл хăй мĕн тунине татах тепĕр хут тĕплĕн шухăшласа тухтăр. Кашни çын ĕçе е службăна пырсан, ĕç тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе, пур тĕрлĕ хĕçпăшалсем те ытларах туса кăларас тĕлĕшпе мĕн тума май килни çинчен тата мĕн тума кирли çинчен шухăшласа пăхтăр.

Совет рабочийĕсемпе работницисене, мĕнпур совет халăхне илсен, вĕсем нимĕç оккупанчĕсене çапнă, çапаççĕ тата гитлеризма пĕтĕмпе пĕтерсе тăкиччченех малашне те çапĕç. (Нумайччен алă çупаççĕ). Эпир кĕрешÿ йывăрлăхĕ çине тÿрех пăхатпăр. Эпир йывăрлăхсенчен халĕ те, гитлерла Германие хирĕç кĕрешме пуçланă малтанхи кунсенчи пекех, хăрамастпăр, вĕсем умĕнче чĕтресе ÿкместпĕр. (Алă çупаççĕ). Эпир тĕрĕс ĕçшĕн, хамăрăн тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн, никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешнине пĕлетпĕр. (Алă çупаççĕ). Гитлеризма хирĕç пыракан çак аслă кĕрешÿре эпир пĕччен марри не пĕлетпĕр. Гитлерла тиранин пусмăрĕ айĕнче асапланакан, хăйсене ирĕке кăларассишĕн, хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне каялла тавăрассишĕн кĕрешекен, ирĕке юрататакан пур халăхсем те пирĕнпе пĕрле. Тăшмана аркатса тăкассине, çĕнтерÿ пирĕн алăра пулассине эпир питĕ çирĕп шанса тăратпăр. (Алă çупаççĕ). Великобританипе Совет Союзĕнчи рабочи класс хушшинчи туслăх сывă пултăр! (Нумайччен алă çупаççĕ). Этемлĕхĕн пĕтĕмĕшлĕ тăшманне хирĕç пыракан кĕрешÿ ялавне çÿлерех çĕклер! Ĕç тухăçлăхне кунран кун хăпартса пырăпăр, Великобритани çарĕпе Совет Союзĕн Хĕрлĕ Çарне ытларах та ытларах танксем, самолетсем, тупăсем, минометсем тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем туса парăпăр! (Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ). Эпир гитлерла Германие пĕтерсе тăкса аслă çĕнтерÿ тăвасси сывă пултăр! (Нумайччен, тăвăллăн алă çупаççĕ).

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче вăрçă вăхăтĕнчи заем ăнăçлăн сарăлать

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен финанс министрĕ Моргентау çапла пĕлтернĕ: январь уйăхĕнче государствăн вăрçă вăхăтĕнчи заемĕн облигацийĕсене пĕр миллиард долларлăх ытла сутнă, çакă вăл декабрь уйăхĕнче сутниннчен 2 хут ытларах пулать. Пĕлтĕрхи май уйăхĕнчен пуçласа, вăрçă заемне 3 миллиард та 600 миллион долларлăх вырнаçтарнă. Çав заем облигацийĕсене ку таранччен американецсем 7 миллион çын илнĕ.

Моргентау тата çакна палăртса каланă: заем облигацийĕсене сутас ĕçе малалла татах та вăйлатмалла, мĕншĕн тесен Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен вăрçă ĕçĕсен тем пысăкĕш программине пурнăçа кĕртме укçа-тенкĕ пит те нумай кирлĕ, тенĕ.

Болгари хресченĕсене суд туни

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Анкарари корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Плевенри (Болгария) военнăй суд темиçе хресчене, нимĕçсене хирĕç восстани тума чĕнекен листовкăсем сарнăшăн айăпласа, нумай çуллăха тĕрмене хупмалли приговор йышăннă.

ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Февралĕн 4-мĕшĕнче ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн черетлĕ 4-мĕш пленумĕ пулчĕ. Пленум Сталин юлташ 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă докладра лартнă задачăсене комсомолăн хулари организацийĕсем мĕнле пурнăçласа пыни çинчен тата организациллĕ ыйтусене сÿтсе-яврĕ.

Докладчик та, тухса калакансем те комсомолăн хулари организацийĕсем Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе тунă ĕçсем çинчен чарăнса тăчĕç. Комсомолецсем производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Эрех заводĕнчи, Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри комсомолецсенчен нумайĕшĕ двухсотниксем.

Хулари çĕршер çамрăксемпе ĕççыннисем, 3 хут воскресникре пулса, пиншер тенкĕлĕх ĕçленĕ. «Комсомол Чувашии» ятлă бронепоезда тума 108.756 тенкĕ укçа пухнă. Чылай организацисенче политикăллă-массăллă ĕçе аван йĕркеленĕ. «Кожупряжь», «Вышивка» артелĕсенче агитколлективсем организациленĕ. Унта политинформацисем те вăхăтра пулса пыраççĕ.

Анчах комсомолăн хулари хăшпĕр организацийĕсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне кирлĕ пек организацилемен-ха. Комсомол организацийĕсем заводсен администрацийĕсене пулăшас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ.

Водосветри пуçламĕш организаци (секретарĕ Назаров юлташ) плансăр ĕçлет. Пухусем вăхăтра пулмаççĕ. Йĕлтĕрçĕсен кросне те начар хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Союзра тăман çамрăксем хушшинче пачах ĕçлемеççĕ, çавăнпа комсомол йышĕ те ÿсмест.

Ку тĕлĕшпе кирпĕч заводĕнчи, пристаньри организацисенче те ĕç начар тăрать. Член укçине пухасси уйрăмăнах япăх тăнине палăртмалла.

Пленум комсомол организацийĕсене союзри ĕçе йĕркелеме, пухусене вăхăтра ирттерме, член укçисене тĕрĕс пухса пыма хушса хăварчĕ. Çавăн пекех пленум союзра тăман çамрăксемпе ĕçлессине вăйлатма кирлине асăрхаттарчĕ. Вĕсен хушшинче калаçусем, докладсем ирттерме, хĕрлĕ кĕтессенче те йĕркелеме, витринăсем тума хушрĕ. Уйрăмăнах комсомолăн заводсенчи организацийĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатма кирлине палăртрĕ. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле фронтовой бригадăсем ытларах организацилеме сĕнчĕ.

Пленум комсомол организацисене ялхуçалăх машинисене юсамашкăн запасра выртакан пайсене тупса пухассине йĕркелеме хушрĕ.

Пленум çавăн пекех шкулсенче вĕренекенсемпе тăтăшах ĕçлемелли çинчен те асăрхаттарчĕ. Вĕренÿ пахалăхне, дисциплинăна хăпартас, çарпа физкультура ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе комсомолăн шкулсенчи организацийĕсен ытларах ĕçлемелле. Урăх çĕртен килнĕ ачасене пулăшассине йĕркелемелле. Вĕсем валли тăхăнмалли кĕпе-йĕм, тумтир туса парас ĕçе килхуçи арăмĕсемпе хулари хĕрсене анлăн явăçтармалла.

Пленум ВЛКСМ хула комитечĕ пуçламĕш организацисене ку таранччен çителĕксĕр ертсе, пулăшса пынине палăртрĕ, çавăнпа хула комитечĕн бюроне малашне активпа тачăрах çыхăнса ĕçлеме хушса хăварчĕ.

Организациллĕ ыйтупа пленум Хула комитечĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ Е. Стешова юлташа, хăй ыйтнă тăрăх, секретарь ĕçĕнчен хăтарчĕ, ăна бюро составĕнчен кăларчĕ.

Пленум Хула комитечĕн секретарĕ пулма А. С. Охандерова юлташа суйларĕ, ăна хула комитет пленумĕн тата бюровĕн составне кĕртрĕ.

Пленум Хула комитечĕн çарпа физкультура енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма А. И. Зрютина юлташа суйларĕ, ăна Хула комитечĕн пленумĕн тата бюровĕн составне кĕртнĕ.

Пленум Дмитриев юлташа пленум тата бюро составĕнчен кăларчĕ.

Всевобуч боецĕсен ăмăртăвĕ

СССР Оборона Халăх Комиссариачĕн пурне те çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен Главнăй Управленийĕ Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа всевобуч боецĕсен вĕренÿри ăмăртăвне туса иртерет. Ăмăрту мартăн 1-мĕшчен пырать. Вăл вĕренĕвĕн пĕрремĕш черетĕнчи боецсем çар ĕçне вĕренмелли программăна мĕн чухлĕ ăнăçлăн пурнăçа кĕртнине тата хăйсем илнĕ пĕлÿсене мĕнле çирĕплетсе хăварнине тĕрĕслемелли ăмăрту пулса тăрать.

Ăмăртăва физически, огневой, химически тата сапернăй подготовка енĕпе туса ирттереççĕ.

Физически подготовка тĕлĕшпе ирттермелли ăмăртăвăн программине çаксем кĕреççĕ: çул тăрăх 5 километр маршпа каясси, чупасси, шуса малалла каясси, граната ывăтасси тата штыкпа тăрса çапăçасси.

Физически подготовка тĕлĕшпе «отлично» паллă илес тесен, 5 километр тăршшĕ марша 40 минута хушшинче туса ирттермелле.

Чупас тĕлĕшпе тÿрем мар çĕр çинчи 120 метр сарлакĕш вырăн урлă (çулсăр çĕрте) чупса каçмалла. Боец хăвăрт та тĕрĕс сиксе тăрса 15—20 метр тăршшĕне 3—5 секунда хушшинче чупса тухать, вырăна тĕрĕс суйласа илет, выртнă хыççăн аяккалла шуса пырать пулсан, вара результата «отлично» тесе шутлаççĕ.

Ăмăртăвăн тепĕр тĕслĕхĕ — шуса малалла каясси. Боецăн выртса пемелли положенирен пластунла 25 метр тăршшĕ шуса каймалла. Кунсăр пуçне ăмăрту программине 30 метр тăршшĕ чупса пырса граната ывăтасси те кĕрет. 30 метр тăршшĕ чупса тухнă хыççăн боецăн чарăнса е чупнă çĕртех 25 метр аяккарахри окопа висĕ граната пăрахмалла.

Штыкпа тăрса çапăçас тĕлĕшпе ăмăрту программине çула май висĕ тĕллеве сиен кÿрсе 25 метр хушши чупса тухасси кĕрет.

Огневой подготовка тĕлĕшпе ăмăртăва çаксем кĕреççĕ: пĕчĕк калибрлă винтовкăран 25 метр инçĕшне пересси (9-мĕш номерлĕ мишень, ку мишеньре çыннăн кăкăрне 10 хут пĕчĕклетсе кăтартнă) тата винтовкăна пĕтĕмпех мар салатса пухасси.

Химически подготовка тĕлĕшпе ăмăртăва хутшăнакансем тÿрем мар вырăнти çул тăрăх, противогаз тăхăнса, 5 километр тăршшĕ утса тухаççĕ; ку ăмăртăвăн тепĕр тĕслĕхĕ — отравляющи веществосемпе сиенленнĕ участок урлă каçасси пулать.

Сапернăй подготовка тĕлĕшпе ăмăртăва хутшăнакансен, сапернăй пĕчĕк кĕреçепе усă курса, май килнĕ таран кĕске вăхăтра пĕччен выртса пемелли ячейка чавса, ăна алă айĕнчи материалсемпе маскировка туса пытармалла.

Ăмăртăва çар ĕçне вĕрентекен пур пунктсенче те, пур учебнăй заведенисенче те райвоенкоматсем ертсе пынипе туса ирттереççĕ. Ăмăртăва подразделенисем тăрăх, взвод составĕпе туса ирттереççĕ. Ăмăртура мĕнле предметпа «посредственно» паллăран кая мар паллă илнĕ, боеца (отделение) çав предметпа зачет парассинчен хăтараççĕ. (ТАСС).

Лондонри массăллă митинг йышăннă резолюци

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Нумаях пулмасть Лондонра массăллă митинг пулса иртнĕ. Çав митингра совет профсоюзĕсен делегацийĕн руководителĕ Шверник юлташ сăмах тухса каланă. Митинг пĕр шухăшлă пулса çакăн пек резолюци йышăннă:

«Англипе Совет профсоюзĕсен комитечĕ ССР Союзĕнчи тата Англири профсоюзсем хушшинче çыхăну тытса пĕрле ĕçлемелле тунине митинг ырласа саламлать. ССР Союзĕнчен килнĕ юлташсем Англири рабочисене ырă сĕнÿсем панине палăртса, митинг гитлерла тискер захватчиксене хирĕç пыракан кĕрешÿре совет çарĕпе совет халăхĕ кăтартса панă паттăрлăхшăн, вĕсем хăйсене шеллемесĕр кĕрешме хатĕр тăнишĕн пĕтĕм чĕререн хĕпĕртесе саванать. Совет çарĕпе совет халăхĕн паттăрлăхĕ Германи войскисене Мускавпа Ленинград патĕнче питĕ вăйлăн аркатса тăкасси патне çеç мар, тата Германи çарне Совет Союзĕпе Германи хушшинчи мĕнпур фронт тăршшĕпех каялла чакарма пуçласси патне те илсе çитерчĕ.

Англипе Совет профсоюзĕсен комитечĕ тунă килĕшĕве ырласа, митинг пур тĕрлĕ çар материалĕсене те, уйрăмах танксем, самолетсем, орудисем, суднăсем тата кăмрăк май килнĕ таранах ытларах кăларма кирлине йышăнать. Çак задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Совет Российĕн тата Британи империйĕн представителĕсем хушшинче Вашингтонра тата Мускавра пулса иртнĕ калаçусем вăхăтĕнче палăртнă пĕрлĕхлĕ шухăш-кăмăлсемпе пĕрлĕхлĕ вăй-хăвата митинг саламлать. Пĕрлĕхĕн тата пĕрпĕрне ăнланса ĕçленин хăвачĕ ĕнтĕ çак çĕршывсем вăрçă хыççăнхи задачăсене татса парас тĕлĕшпе, тĕнчен экономикăллă пурнăçне çĕнĕрен чĕртсе ярас тĕлĕшпе, социальнăй тĕрĕслĕх тăвас тĕлĕшпе, нушалăхран хăраса пурăнассинчен ирĕке тухас тĕлĕшпе малашне те пĕр-пĕрнипе килĕштерсе ĕçлессин никĕсĕ пулса тăрать. Тиранипе варварствăна хирĕç кĕрешекен ирĕклĕхĕн вăйĕсемшĕн хăвăртрах çĕнтерÿ тума май парас тесе, эпир çар материалĕсем туса кăларассине хăвăртлатса ÿстерме сăмах паратпăр».

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Кăнтăрти Китайра çапăçусем Кантонран хĕвелтухăçнелле выртакан районра пыраççĕ. Боло хулине хăйсен аллинче тытса тăрса, Китай войскисем çав вăхăтрах японецсем Вэйчжоу хули çине тапăннине сирсе тăраççĕ. Çавăн пекех тата Китай войскисемпе партизансен активлăхĕ Кантон-Коулун чугунçулĕ çинче те палăрать. Кунсăр пуçне Кантонран хĕвеланăçнелерех пĕчĕк тытăçусем пулса иртнĕ. (ТАСС, февралĕн 3-мĕш).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, партии пурнăç пайĕн — 7—47, экономика пайĕн — 8—88, сыпусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналĕн — 8—23, «Пионер сулĕпе» журналĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 353 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. 6. 58 . 84 п. л.